## Ыйту – хурав

# Чарăну павильонĕ: пĕрисен – «ытлашши», теприсен – çук

**«Анра-сухрасем пур çĕрте те курăнкалаççĕ-ха. Анчах... анчах Анаткас Хачăкра тăнсăртараххисем йышлăрах пек туйăнать. Ара, çак яла палăртса çырнă автобус чарăнăвĕнче «алă пуснисене» вуласан, кунта «ЧМОсемпе ЛОХсем» тата ытти çăмăлттайсем çук тесе калаймăн.**

**Çакнашкал йĕркесĕрлĕх умĕн иртсе çӳренĕ чух пиншер çын курса, вуласа мĕн шутлать-ши? Темĕн ĕнтĕ.**

**Москакасси ял тăрăхне çапла майпа «чапа кăларакан» чарăнăва камăн сăрламалла-ши? Ăна камăн пăхса тăмалла? Е çак «чаппа» хĕл каçса çакăн пек сăмахсем çыракан ăçтиçуксемшĕн тепĕр çул та намăс курмалла-и?**

**Чикме хули. М. Лермонтов».**

Нумай пулмасть çапларах çыру килчĕ хаçат редакцине, çак кунсенче вара автобус чарăнăвĕпе çыхăннă ыйтупа пирĕн пата шăнкăравлакан та пулчĕ. Вăл Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Шарпаш ялĕнчен.

**«Пирĕн ял çумĕпе асфальт çул иртсе каять. Паллах, ялти çынсем нумайăшĕ автобуспа усă курнипе çак çул хĕрне тухаççĕ. Анчах та автобус чарăнăвĕ çук. Çумăр-и, çил-тăман-и – ĕçе каякан та, вĕренме каякан та çанталăка пăхмасть çав, çаплипех автобус килессе кĕтсе тăрать. Малтан Чапаев ячĕллĕ хуçалăхăн тырă хумалли склачĕсем, арман çурчĕ пуррипе хӳтĕре тăраттăмăр. Халĕ вара кунта çара вырăн. Çул çинчи чарăну павильонне тăвасси камăн тивĕçĕ-ши?»** – тесе ыйтрĕ хĕрарăм.

***Асăннă икĕ ыйту çине район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи Владимир Германович Никитин акă мĕнле хурав пачĕ:***

– Пирĕн район территорийĕнче федераллă, республика, муниципаллă тата ял тăрăхĕсен пĕлтерĕшлĕ çулсем иртеççĕ. Çак çулсене пăхса тăраканĕсем те тĕрлĕ организацисем. Анаткас Хачăк ялне палăртакан чарăну павильонĕ вырнаçтарнă çул республика пĕлтерĕшлисен шутĕнче. Ăна пăхса тăрассипе «ДЭП-146» предприяти тимлет. Çавăнпа та павильонсене тасатса, тирпейлесе тăрасси те вĕсен тĕллевлĕ ĕçĕ пулса тăрать.

Çапах та чарăну павильонĕсенче ӳкерекен-çыракан «художниксем» хамăрăн хушăра пулни (ку Анаткас Хачăкра кăна мар, пур çĕрте те тĕл пулать) пирĕн культура шайне кăтартса паракан «тĕкĕрсенчен» пĕри. Çак павильона тума ыйтса вырăнти çынсем темиçе хутчен те çырупа тухрĕç. Халĕ вара, ыйтăва татса панă хыççăн, хамăр усă куракан япалана хамăрах пĕтеретпĕр.

Шарпаш ялĕнче пурăнаканăн ыйтăвĕ пирки. Ял çумĕпе иртекен çул та республика пĕлтерĕшлĕ çул. Унăн «хуçи» – «Чувупрдор» республика патшалăх учрежденийĕ. Эпир чарăну павильонĕсем тăвас ыйтупа вĕсем патне районти ытти ялсем патĕнче те çакнашкал лару-тăру пулнине пĕлсе тухатпăр. Çырупа пĕрре мар тухнă ĕнтĕ. Ытларах чухне чарăну павильонĕсене çулсене юсанă чух туса параççĕ. Тăкакĕсем – çулсене юсама уйăрнă тĕллевлĕ укçа-тенкĕрен. Хальлĕхе вара, кризис вăхăтĕнче, республика бюджетĕнче çулсем юсама укçа-тенкĕ пăхса хуман. Çавăнпа павильон тăвасси, шел пулин те, паянах пулакан ĕç мар.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Милици хроникинчен

# Укçи пултăр, таварĕ тупăнать

Пĕр-пĕр япала кирлĕ пулсан эпир тӳрех лавккана е тата пасара кайма хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Аслисем кăна мар, ачасем те ăçта кайса мĕн туянмаллине аван чухлаççĕ. Çĕнĕ çул уявĕ çывхарнă май вара шăпăрлансем те хĕм-çулăм кăларакан, сирпĕнекен япаласем çине куç хываççĕ. Вĕсене туянни мĕн патне илсе çитерме пултарни пирки пачах шутламаççĕ.

Акă Муркаш пасарĕнчех пĕр предприниматель управ вăхăтĕнчен тухнă петардăсене сутассипе тимленĕ. Кам туянать – ача-и, аслăраххисем-и – уншăн пурпĕрех, кĕсьене укçа килтĕр. Çак усламçăна вара административлă протокол çырса явап тыттармалла тунă.

# «Мунча ма хутаççĕ-ши, ма вĕри тăваççĕ-ши?»

Çанталăкĕ питĕ сивĕ тănипе çак кунсенче мунча кĕрес текенсем мунча кăмакисене те вăйлăрах хутаççĕ паллах. Акă çак эрнере Ваçкасси ялĕнче, унтан кăшт маларах Нискассинче те, мунчасенче пушарсем тухнă. Çулăм вара мунчана çеç мар, лаç-витесене те палăрмаллах сиен кӳнĕ. Пур çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерменнине тата асăрханманнине пула кил хуçисен тăкак курма тивет.

# Ăратлă сурăх вăрланă

Иртнĕ кунсенче Ярославка ялĕнчи пĕр кил хуçалăхĕнчи витерен çĕрлехи вăхăтра «романовская» ăратлă сурăхпа пилĕк уйăхри путек «çухалнă». Çаксем, паллах, хăйсем тĕллĕн машина çине ларма пултарайман. Вăрăсем машинăпа пулни вара паллă. Кил хуçине 4000 тенкĕ тăкак кӳнĕшĕн вĕсен Уголовнăй кодексăн 158 статйипе тĕплĕн паллашма тивĕ.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

## «МегаФон» компани пĕлтерет

# Юрататăп сана, Манăн Республика!



**Эпир ытларах кам патне шăнкăравлатпăр (телефонпа кампа вăрах калаçма кăмăллатпăр). Çак ыйтусен хуравĕсем, паллах, кашни çыннăн тĕрлĕ. Çапах çирĕплетсех калама пулать: эпир телефонпа час-часах шăнкăравласа калаçакансем – пирĕн çывăх тăвансем, ĕçри е вĕренӳри ĕçтешсемпе юлташсем, лайăх туссем. Урăхла каласан – юнашар, пĕр хулара е хамăрăн республикăра пурăнакан çынсем.**

**Нумайăшĕ çак уйрăмлăха шута илекен, пирĕн хутшăнăва тата та меллĕрех тăвакан тариф планĕ çине кăмăлласах куçнă пулĕччĕ. Халĕ çакăн пек майсем çуралчĕç. “МегаФон” компани, хăйĕн клиенчĕсен ыйтăвĕсене яланах шута илекенскер тата вĕсене перекетлĕ условисемпе пĕр-пĕринпе çыхăну тытма сĕнекенскер, çĕнĕ тариф планне хатĕрленĕ. Унăн ячĕ те пире çывăх – “Манăн Республика”.**

**Кам çывăх çынсемпе калаçнă чух вăхăта пăхма хăнăхман – вĕсен çак майсем тĕлĕшпе тимлĕ пулмаллах. Çывхарса килекен Çĕнĕ çул уявĕн кунĕсем умĕн – пушшех. Шăпах çак кунсенче эпир çывăх çынсене Çĕнĕ çул, Раштав, кивĕ Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр. Хăвăрах шутласа пăхăр: çĕнĕ тариф планĕнче уйăхсерен хывмалли абонент тӳлевĕ çук, “МегаФон” сечĕпе çыхăнасси те тӳлевсĕр. Çыхăннă чухнехи аванс тӳлевĕ пĕчĕк – 30 тенкĕ çеç. “Манăн Республика” тарифри шалти пĕр sms-пĕлтерӳ хакĕ те 50 пус кăна.**

**Абонентсемшĕн меллĕ пултăр тесе пĕтĕм Чăваш Ене икĕ тариф зонине уйăрнă. “Регион” тариф зонине республикăн пысăкрах территорийĕ кĕрет. Тарифра шалта туссемпе тата çывăх çынсемпе калаçма – минутшăн 0 пус. Çĕнĕ тариф планĕнче Атăл тăрăхĕнчи “МегаФон” АУО абоненчĕсен телефон номерĕсем, ытти çыхăну операторĕн мобильнăй номерĕсем, вырăнти номерсем çине тухакан шăнкăравсен хакĕ – пĕтĕмпе те 95 пус.**

**“Хула” тариф зонинче – Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Кӳкеç тата Лапсар. Кунта тарифри шалти тухакан шăнкăравăн 1 минучĕ абонентшăн 10 пуса кăна ларĕ, “Хамăн сеть” тариф опцийĕпе çыхăнсан вара пĕтĕмпе те 5 пус çеç.**

**“МегаФон” хăйĕн абоненчĕсене паха çыхăнупа, питĕ анлă пулăшу ĕçĕсемпе савăнтарать. “Манăн Республика” тариф планĕпе çĕнĕ майсемпе усă курăр!**

**Тĕплĕнрех – компанин megafon.ru сайтĕнче.**

*13.10.2000 ç. панă 68813-мĕш лицензи.*

МегаФон

### Прогноз погоды с 19 по 25 декабря

www.yandex.ru

| сб 19 | вс 20 | пн 21 | вт 22 | ср 23 | чт 24 | пт 25 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ясно | переменная облачность, небольшой снег | облачно, небольшой снег | облачно, небольшой снег | переменная облачность | снег | облачно, небольшой снег |
| -20 | -19 | -12 | -8 | -19 | -9 | -6 |
| -24 | -20 | -13 | -21 | -17 | -12 | -15 |


## Пĕлтерӳсем. Объявления




Предприниматель Еропанов Н.В. продает компьютеры по оптовым ценам. Предоставляет льготный кредит по Президентской программе «Компьютер - в каждый дом». Устанавливает спутниковые антенны «Триколор». Тел.: 62930, 89196515333, 89176519222 рядом с санэпидстанцией. 4-5.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.




ИП Еропанов Н.В. принимает на ремонт: пылесосы, стиральные машины, электродвигатели, швейные машины. Тел.: 62-9-30, 8-919-65-15-333. 2-2.

Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор любых марок.
Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ. Доставка.
Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 5-6.

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 7-8.

Продаю качественные керамзитобетонные блоки от 26 руб/шт., предновогодние скидки. с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905- 340-07-78. 4-7.

Рытье колодцев любой глубины и сложности. Продаем кольца, щебень, стройматериалы.
Тел.: 8-903-379-09-01. 3-5.

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР» с установкой, гарантией и обслуживанием.**
**Тел.: 8-905-345-77-19. 2-4.**

Продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. Парковая, индивидуальное отопление, в рассрочку. Тел.: 8-906-389-34-18. 1-2.

Военный билет серии АН № 3099149, выданный 8 июля 2005 года ВК города Щелково Московской области на имя Ефимова Николая Леонидовича, считать недействительным.

Февраль уйăхĕнче пĕрремĕш хут пăруламалли хĕрлĕ-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-865-20-86.

Требуется продавец-консультант по автозапчастям в с. Моргауши. Желательно с ИП и с компьютером, выходом в Интернет. Тел.: 8-960-311-23-87. Куплю бычков. Тел.: 8-906-381-95-03. 1-2.

Конкурсный управляющий ООО «Агрофирмы «Рассвет» уведомляет о реализации имущества ООО «Агрофирмы «Рассвет» по цене 1650000 руб.
О своем желании приобрести имущество ООО «Агрофирма «Рассвет» вы можете заявить конкурсному управляющему в течение месяца с момента опубликования данного объявления. Подать заявление и получить дополнительную информацию можно по адресу: г. Чебоксары, ул. Калинина, 80, кон. тел.: 8-960-305-35-41, 44-62-03.

Продаю: листы оцинкованные, профнастил (крашеные и некрашеные). Пиломатериал обрезной (хвоя).
Адрес: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».
Тел.: 8-903-346-40-58. 1-5.

**22 декабря с 12 до 13 час. в Р Д К**
**выставка-продажа «Полезные товары»**
**Слуховые аппараты – от 2500 до 12000 р**
**ВЫБОР БОЛЬШЕ - ЦЕНЫ НИЖЕ ! ГАРАНТИЯ. ЗАПЧАСТИ**
**Прибор «Живая–мертвая вода». Отпугиватели грызунов. Ультразвуковые стиральные машинки «Самоздрав». Ионизатор «Горный воздух». Картина – обогреватель. Аппликатор «Колючий доктор». Вибромассажные пояса, жилеты, накидки. Массажер для головы «Волшебные пальчики» - подарите близким приятные ощущения – 500 р**
**Электронная приманка для рыбы.** г. Ижевск т. (3412)902546

Блоки керамзитобетонные, дешево. Тел.: 8-902-327-55-65. 5-6.

Плиты пустотные и п-образные, ж/б балки, фундаментные блоки, кирпич бой, кирпич, керамзит, все б/у.
Тел.: 8-905-343-13-73, 8-905-343-67-50. 1-5.

Продаю кухонный гарнитур, б/у.
Тел.: 8-906-387-77-08.


«Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци» патшалăх учрежденийĕн коллективĕ Турайри ветеринари лечебницин заведующийĕн Т.И. Ухваринан

**АМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru.

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 2 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 18.12.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3790.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.